*В.Г. Хлебникова,*
*Чăваш патшалăх университечĕ,*
*Шупашкар*

# Н.ТЕРЕНТЬЕВ ПЬЕСИСЕНЕ ВĔРЕНТНĔ МАЙ ВĔРЕНЕКЕНСЕН ÇЫХĂНУЛЛĂ ПУПЛЕВНЕ АТАЛАНТАРАССИ

Тăван чĕлхепе литературăна вĕрентессин тĕп тĕллевĕ – вĕренекенсен çыхăнуллă пуплевне аталантарасси. Ахальтен мар пуль ăсчахсем çыхăнуллă пуплеве çирĕп пĕлӳ никĕсĕ теççĕ. «Литература – сăмах ăсталăхĕ, çавăнпа ăна илемлĕ сăмахлăх тетпĕр», – палăртнă «Чăваш литератури программинче». – Çыравçăн сăнарлă хайлавĕ çумне учитель хушса каланă витĕмлĕ те ĕнентерӳллĕ сăмах ачасен чунне ĕмĕрлĕхе кĕрсе юлма пултарать» [1, С. 6].

«Чăваш литератури урокĕсем – тăван халăх культурипе историне, ăс-хакăл пуянлăхне вĕрентмелли пĕртен-пĕр уроксем... Чăваш халăхĕн алă ĕç ăсталăхĕ, юрри-ташши, тĕрри-эрешĕ, театрĕ, живописĕ, скульптури, архитектури, йăли-йĕрки, тăван çут çанталăкĕ чăваш литературипе чĕлхе урокĕсенче пĕр-пĕринпе килĕшӳллĕ çыхăнса пымалла. Писатель биографийĕпе пĕрле самана, çĕр-шыв утăмĕсем, унăн тантăшĕ-тусĕсен, ĕçпе çар паттăрĕсен, композиторсемпе художниксен, тĕпчевçĕсемпе ытти ăстасен ĕçĕсем курăнса пымалла. Литература вĕрентнĕ чухне халăх культурин пĕтĕм пуянлăхне асра тытни вĕрентӳ ĕçне йывăрлатмасть, пуянлатать кăна, усăллăрах тăвать» [2, 5].

Тĕпчевçĕсем палăртнă тăрăх, вĕрентӳ кĕнекине кĕртнĕ хайлавсем вулакансене хумхантаракан шухăшсене, ĕçсене, ыйтусене ĕненмелле, тĕрĕс хускатса ăнлантараççĕ, уçса параççĕ пулсан, вĕсем шкул ачисене систермесĕрех тыткăнлаççĕ. Кун пек произведенисене вĕренекенсем хаваслансах вулаççĕ. Çак шухăшсене П.П. Блонский сăмахĕсем лайăх çирĕплетеççĕ: «Литературное образование состоит прежде всего в литературном чтении. Но это чтение – не чтение безучастного читателя или холодного рецензента. Исходный пункт его – духовные запросы подростков, которые ищут в книге резонанс своим переживаниям и стимул к дальнейшему развитию их» [3, 270].

Çак сăмахсем Н.Т. Терентьев пултарулăхĕпе тачă çыхăннă. Унăн пьесисем çынпа çут çанталăк, уйрăм çынпа пĕтĕм халăх, çынпа çын хушшинчи нумай тĕрлĕ çыхăнусене сăнарлăн уçса кăтартса вĕренекенсене, вулакансене пĕлӳ параççĕ; литературăпа этем тĕнчине ăнланса илсе хаклама вĕрентеççĕ, вĕсен кăмăл-

туйăмне, шухăшлавне аталантарма, ăс-хакăлне çивĕчлетме, ырă туйăмсем çуратма пулăшаççĕ.

Программăпа килĕшӳллĕн шкул ачисем драматурги произведенийсемпе пуçласа пиллĕкмĕш класра паллашаççĕ, ун хыççăн кашни çулах (кашни класрах) драма тĕсĕсене вĕренеççĕ. Вĕсем драматургин ансат тĕслĕхĕсемпе, теорин ансат ăнлавĕсемпе паллашаççĕ, юптару, сăвă, калав тăрăх кĕске инсценировкăсем лартма хăнăхаççĕ. Телевизорпа пăхнă чăвашла спектакльсене, ялти халăх театрĕпе шкулти драма кружок членĕсем лартнă спектакльсене ушкăнпа сӳтсе явма хăнăхмалла. VIII-IX классенче вĕренме пуçланă çĕре ачасен драма произведенийĕсене вуласа тишкерме ансат хăнăхусем пулмалла.

Драма произведенийĕсене шкулта вĕрентме, паллах, çăмăл мар, анчах йывăрлăхсене шкул практики, учительсен опычĕ çирĕплетсе панă методика сĕнĕвĕсене, жанр уйрăмлăхĕсене, кашни пьесăн уйрăмлăхĕсене шута илни çĕнтерме пулăшать.

Методистсем вĕренекенсене драма произведенийĕсене вуланă май хайлавăн (пьесăн) тĕп шухăшне, содержанине ăнланма пулăшмаллине палăртаççĕ, шкул ачисен ĕçне куракансем пек мар, вулакансем пек йĕркелеме хушаççĕ. Театрпа драматурги терминĕсене тетрадь çине çыртармалла, пĕлтерĕшĕсене ăнлантарса памалла. Сăмахран, драма, диалог, монолог, ремарка, реплика, авансцена, драма, комеди, пролог, суфлер, режиссер тата ытти те.

V-VII классенче драма произведенийĕсемпе паллашасси учитель калаçăвĕнчен пуçланать. Учитель ачасенчен вĕсем театр çинчен мĕн пĕлнине, радио-телепьесăсем çинчен, ачасем шкулта лартакан спектакльсенче хутшăннипе хутшăнманнине ыйтса пĕлет. Драма хирĕçтăру (конфликт) çинче никĕсленнине ăнлантарса парать. Урока хатĕрленнĕ чухнех учитель драмăри хăш роле (паллах, ачасен характерне, пултарулăхне шута илсе) кама вулаттарассине палăртать. Фонохрестомати е магнитофон çине çырнă пьеса пулсан, вĕренекенсене итлеттерет, хăш персонаж мĕнле калаçнине, вĕсен калаçăвĕн чĕлхе уйрăмлăхĕсене сăнама, çавăн пекех автор панă кăтартусене, сĕнӳсене асра тытма хушать.

Пьесăна пĕрремĕш хут вуласа тухнă хыççăн учитель вĕренкенсем содержанине мĕнле ăнланнине, кампа кам тата мĕншĕн кĕрешнине, кам енче тĕрĕслĕх пулнине ыйтса пĕлет, вĕренекенсене ăнланма, ĕçсемпе калаçу урлă пьесăри геройсен сăнарĕсене «куç умне» кăларса тăратма пулăшать. Çавăн пекех хăш сăнар ытларах килĕшнине, мĕншĕн, мĕн пирки кăмăла кайнине, пьесăра çырса кăтартнă ĕç вĕсене мĕн çĕннине пĕлме пулăшнине ыйтса пĕлет. Çав вăхăтрах конфликт (хирĕçӳ) хăçан,

мĕн пирки, хăш геройсем хушшинче пуçланнине, вăл мĕнле аталанса пынине, хăçан чи çӳллĕ шая (кульминацине) çитнине, кĕрешӳ мĕнпе вĕçленнине тишкереççĕ.

Рольсемпе вуланă чух учитель режиссер евĕр вĕренекенсем кашни персонажăн сăмахĕсене кирлĕ (тивĕçлĕ) сасăпа, автор кăтартăвĕсемпе сĕнĕвĕсем пурнăçланса пынине асăрхаса тăрать.

Вĕренекенсен çыхăнуллă пуплевне аталантарас тĕллевпе драма произведенийĕсенчи сăмахсемпе, терминсемпе усă курма хăнăхтарас тĕллевпе словарь диктанчĕсем ирттерет, çав сăмахсемпе предложенисем йĕркелеттерет. В.П. Никитин вĕренекенсен çыру ĕçĕсене çĕнĕ сăмахсене: авансцена, акт, актер, артист, актриса, артистка, амфитеатр, анонс, аншлаг, афиша, бельэтаж, бутафори, галерея, гример, грим, партер, персонаж, программа, пьеса, публика, рампа, мизансцена, декораци, дирижер, инсценировка, режиссер, реквизит, реплика, ремарка, костюмер, либретто, ложа, бенуар, оркестр, спектакль, суфлер, эпизод, ярус тата ытти те кĕртме сĕнет. Вĕренекенсене асра тытма тата пуплевре усă курма çăмăлтарах пултăр тесе чăвашла куçарса ăнлантарнисĕр пуçне ушкăнсем çине пайлама пулать. Сăмахран, пьеса ăнлавпа çыхăннисем, театрăн курмалли залĕпе çыхăннисем, театрта ĕçлекен çынсем тата ыт. те. Словарьсемпе усă курса куçару ĕçĕсем (вырăсларан чăвашла, чăвашран вырăсла), синонимсем туптарса, ют чĕлхе словарĕсемпе усă курса тĕрлĕ ĕçсем ирттерме пулать.

Пьесăна рольсемпе вуланă хыççăн, магнитофон е фонохрестомати итленӗ хыççăн вĕренекенсен çыхăнуллă пуплевне аталантарма учитель тишкерӳллĕ калаçу йĕркелет. Кунта эпир тĕслĕхшĕн Н.Т. Терентьевăн «Çил çинчи çеçпĕл» пьесине илĕпĕр.

Пьеса çинчен калаçнă чух çак ыйтусем çинче чарăнса тăрсан аван: 1. Пьесăн тулашĕ (ячĕ, миçе пайлă, миçе курăну, автор кăтартăвĕсем, ăнлантарăвĕсем). 2. Драмăри ĕçсем хăçан тата ăçта пулса иртеççĕ? 3. Конфликт (хирĕçтăру) мĕн çинче никĕсленет, мĕн пирки пулса иртет? 4. Кам енче тĕрĕслĕх? 5. Пьесăри персонажсене сăнласа парăр. 6. Ырă сăнарсен ĕçĕ-хĕлĕ, шухăшĕсем, ĕмĕчĕсем. 7. Пьеса мĕнпе вĕçленет? Сире пьеса вĕçĕ килĕшрĕ-и? 8. Пьесăна вуласа тухсан сирĕн мĕнле шухăшсем çуралчĕç? 9. Пьесăн тĕп шухăшĕ, сирĕн шутпа, мĕнле? 10. Чăваш академи театрĕнче ку пьесăна темиçе хутчен те лартнă, радиопа та трансляциленĕ. Пьесăри рольсене кам-кам вылянине, вĕсем мĕнле вылянине кĕскен каласа парăр. 11. Çак пьеса (спектакль) пирки артистсем, критиксем каланине, вĕсен аса илĕвĕсене каласа парăр.

Тишкерӗве учитель хӑйӗн пӗтӗмлетӳ сӑмахӗпе вӗҫлет, вӗренекенсене ҫакӑн пек схема тума сӗнет:

| | | | |
|---|---|---|---|
| Тӗп конфликт | Персонажсене сӑнлани | Пьесӑн композицийӗ | Пьесӑн тӗп шухӑшӗ |

Схема тӑрӑх ӗҫленӗ чух вӗренекенсем драма мӗнле пулса иртнине, вӑл мӗнрен пуҫланса малалла аталанса пынине ӑнлантарса параҫҫӗ, хайсен шухӑшне ҫирӗплетме пьесӑри сыпӑксене илсе кӑтартаҫҫӗ. Пьесӑн тӗп шухӑшне палӑртнӑ чух пурнӑҫра пулса иртекен фактсемпе, тӗслӗхсемпе ҫыхӑнтараҫҫӗ, ҫамрӑксене те, ҫитӗннисене те ӑса вӗрентнине пурнӑҫра тӗрӗс ҫулпа пыма хистенине палӑртаҫҫӗ.

Драмӑра ҫынсем хушшинчи ҫыхӑнусем, хирӗҫӳсем (конфликтсем) диалогра палӑраҫҫӗ е персонажсен монологӗнче сисӗнеҫҫӗ. Геройсем хӑйсене мӗнле тыткаласси вӗсем пьесӑн тӗп конфликчӗ пирки мӗн шутланипе, ӑна ырланипе е йышӑнманнипе ҫыхӑннӑ. Вулакансем те, пьесӑна сцена ҫинче куракансем те геройсен шухӑшӗсемпе килӗшсе вӗсен енне туртӑнни палӑрать. К.С. Станиславский питӗ тӗрӗс каланӑ: «Если пьеса не вызвала ответной реакции, волнения читателя или зрителя, она не достигла цели» [5. С. 52].

Тӗпчевҫӗсем палӑртнӑ тӑрӑх, драма произведенийӗсене вӗрентнӗ чух вӗренекенсен ҫыхӑнуллӑ пуплевне аталантарма пьесӑсене хитре, тӗрӗс сасӑпа палӑртуллӑн вулани пысӑк вырӑн йышӑнать. Тӗслӗхлӗ вулав – учитель е грампластинка ҫине ҫырса илнӗ артистсен, сӑмах ӑстисен вулавӗ пулса тӑрать.

Уроксенче кӑтарту тата ӗҫ хатӗрӗсемпе анлӑ усӑ курмалла. Сӑмахран, Н.Т. Терентьев драматургине вӗреннӗ чухне унӑн кӗнекисен выставкине йӗркелемелле, чӑваш театрӗн буклечӗсемпе, программисемпе, афишисемпе, реклама хаҫачӗсемпе, театр ҫурчӗсемпе артистсен фотоӳкерчӗкӗсемпе, вӗренекенсем хӑйсем хатӗрленӗ литература хаҫачӗсемпе урокра усӑ курмалла, чӑваш чӗлхипе литератури кабинечӗсенче ҫав материалсем упранмалла. Ҫавӑн пекех Н.Т. Терентьев пултарулӑхӗ ҫинчен ҫырнӑ кӗнекесем, хаҫат-журналсенчи статьясем те кабинетра е библиотекӑра пулмалла, вӗсемпе урокра усӑ курмалла.

Персонажсен сӑнарне уҫса пама В.В. Горбунов, Г.М. Адгамова, М.Г. Ахметзянов тата ытти меслетҫӗсем ҫакӑн пек таблицӑпа усӑ курма сӗнеҫҫӗ:

Таблица

| Геройăн социаллă характеристики | Авторăн ремаркисем | Ытти геройсем çак персонаж пирки мĕн каланă | Персонаж калаçăвĕ, чĕлхе уйрăмлăхĕ | Персонаж тунă ĕçсем. Вĕсене мĕн тĕллевпе тунă |
|---|---|---|---|---|
| Кузьма Петрович Карпов чухăн хресчен çемйинчен Аслă Отечественнăй вăрçăра пулнă | икĕ питлĕ чее çын | 49 çулта, тĕп героиньăн ашшĕ. Анна: «Эсĕ, атте, калама пĕр тĕрлĕ калан, пуранма тепĕр тĕрлĕ пуранатăн». Ангелина (вăрттăн):. «Йĕр çине ÿкнĕ, Кузьма Петрович! Тархасшăн, илсе кай пытарнă япалусене!» Çăрахвин: «Мĕнле пуç таяççĕ, камсем таяççĕ, çавна сăнанă-и эсĕ? Юратмаççĕ сана çынсем, Филипп Хрисаныч. Мĕн ачаран ман куç умĕнче ÿсрĕн. Ас тăватăн-и ял Советĕнчен чернил кĕленчи вăрласа тухнине? Эпĕ сана хăлха пăртăм, уншăн эс мана çĕрле чулпа петĕн. Ман хуса | Кузьма Петрович: «Кам пирĕн пек пуранать ялта? Тухса пăх-ха эс урама. Кил тăрах тĕрĕслесе кай. Çимеĕçме çителĕклĕ, кил-çурт, шĕкĕр турра! Ĕçре эпĕ авторитетлă, çынсем пуç таяççĕ. Мĕн çитмест сире? Кузьма Петрович (Аннана): – Тухса кай килтен! Тасал! Е кăларса ывăтасса кĕтетĕн-им? | Кузьма Петрович: «Акă мĕн шутлатăп эп, Çăрахвин, сыхă тăни пăсмасть. «Москвича» заем вылянă укçапа илнĕ тата перекет кассинче вунă çул хушши пухнă укçа пулнă. Ултă пÿлĕмлĕ çак çурта хамăр мĕн мăшăрланнă кунтанпа шалу укçине пухса пырса, хура çăкăрпа, шывпа пуранса... Хаклăрах япаласене тарттсан та пăсмасть. Ĕçре ман йĕркеллех, эпĕ тап-таса. Хуть те шуйттан патшин ревизорĕ килтĕр, нимĕн те тупаймасть. (Шăлне шатăртаттарать). Ну, ну, хĕрĕм, аçуна хирĕç тăрас терĕн эппин. Сисрĕм, сисрĕм эп çакна юлашки |

Таблица вĕçĕ

| Геройăн социаллă характеристики | Авторăн ремаркисем | Ытти геройсем çак персонаж пирки мĕн каланă | Персонаж калаçăвĕ, чĕлхе уйрăмлăхĕ | Персонаж тунă ĕçсем. Вĕсене мĕн тĕллевпе тунă |
|---|---|---|---|---|
| | | çитсе сан хăлхуна пăрса татсах илмелле пулнă. Халĕ акă ăçта çитсе тухрăн эсĕ?» | | кунсенче». |

Вĕренекенсен çыхăнуллă пуплевне аталантарас тĕллевпе, çавăн пекех пьеса содержанине тарăнрах та çирĕпрех ăнланма учитель сочинени çырма киле ĕç парать: 1.Пьесăри хĕрарăмсен сăнарĕ. 2. «Кам халăх çине сурать, халăх ăна тусан тăвать» текен сăмахсем хăш сăнарсене пырса тивеççĕ? Пьесăри сăнарсене уçса парăр. 3. Пьесăри «ашшĕсемпе ачисем» проблемăна çутатса пани. 4. «Çил çинчи çеçпĕл» драмăри амăшсен сăнарĕ (Çăрахвин, Ангелина, Елена Агаповна). 5. Анна сăнарĕ. 6. Ирина Яковлевна тата шкул çамрăк ăру кунçулĕнче.

Драматург пурнăçĕпе пултарулăхĕ, унăн пьесисем тăрăх йĕркеленĕ викторина – вĕренекенсен пуплевне аталантармалли паха мел. Викторина ыйтăвĕсене хатĕрлеме вĕренекенсене хăйсене те явăçтармалла. Тĕслĕхрен:

I. Николай Терентьев драматург биографине пĕлетĕр-и?

1. Н.Т. Терентьев драматург хăçан, ăçта çуралнă?

2. Пулас писатель тăван ялĕнчи тулли мар вăтам шкултан вĕренсе тухсан тата ăçта вĕреннĕт?

3. Тĕрлĕ çулсенче Н.Т. Терентьев ăçта ĕçленĕт?

4. Н. Терентьевăн пĕрремĕш пьеси мĕн ятлă, вăл хăçан, ăçта пичетленнĕ? (Хурав: «Сирень аллейи» ятлă, 1951 ç. «Ялав» журналта пичетленнĕ).

5. Тăван литературăри ўсĕмсемшĕн Н.Т. Терентьев драматурга мĕнле хисеплĕ ятсем панă?

6. Н. Терентьевăн малтанхи нумай актлă пьеси мĕн ятлă? («Çунатлисем те çĕр çинчех»).

7. Н. Терентьев пьесисене мĕнле чĕлхесене куçарнă? (Вырăсла, удмуртла, марилле, лезгинла т. ыт. те).

II. «Çил çинчи çеçпĕл» драма содержанине астăватăр-и?

1. Драмăри çак сăмахсене кам калать: «Тар, Анна! Куçна шăтараççĕ. 8-мĕш «Б» класс ачисем – арçури йăхĕнчен вĕсем» (Хурав: Алтати).

2. Эсĕ, атте, калама пĕр тĕрлĕ калан, пурăнма тепĕр тĕрлĕ пурăнатăн. Эпĕ пĕчĕк пуль, çапах ăнланап. (Хурав: Анна хăйĕн ашшĕне).

3. Анна, эпир çемьере яланах пĕр-пĕринпе ăнланса шăкăл-шăкăл пурăннă, ĕçсе-çупса, харкашса курман эпĕ, ачасене кӳрентермен, ыйт акă аннӳрен. (Хурав: Кузьма Петрович, Анна ашшĕ).

4. Хĕрачу пире хирĕç вăрçă пуçланă... Вăрçа хирĕç – вăрçă! (Хурав: Урбалкин).

5. Чуна хурт çиме тытăнни хăрушă япала вăл, эй хăрушă, пĕрре йĕп вăрласан, лаша та вăрлас килет. (Хурав: Филипп Хрисанч).

Рефератсем çырни – вĕренекенсен çыхăнуллă пуплевне аталантармалли паха мел. Темиçе сăнарсене уçса параканнисене те, драмăлла сценăсене сăнласа парса пĕтĕмлетӳ тума май параканнисене те вĕренекенсене сĕнме пулать. Телевизорпа пăхнă е сцена çинче лартса панă спектакле рецензилени – вĕренекенсемшĕн пуплеве аталантарма май паракан ĕç. Пьеса хыççăн панă ыйтусемпе ĕçсене пурнăçлани шкул ачисен пĕлĕвне ӳстерме, пуплевне аталантарма май парать.

**Усă курнă литература**

1. Чăваш литератури программи: Чăваш шкулĕн V-XI-мĕш класĕсем валли. – Шупашкар: Чăваш кĕн. изд-ви, 2004.

2. Никитин В.П. VIII тата IX классенче чăваш литератури вĕрентесси. – Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви, 1991.

3. Блонский П.П. Избр. пед. произвед. / П.П. Блонский. – М.: Изд-во АПН РСФСР, 1961.

4. Терентьев Н. Суйласа илнĕ пьесăсем. Ум сăмах / Н. Терентьев – Шупашкар: Чăваш кĕн. изд-ви, 1994.

5. Станиславский К.С. Собр. соч. в 8 т. / К.С. Станиславский – М.: Худ. лит., 1959. – Т.3 – С.52.

*О.П. Терехова,*
*Чăваш патшалăх университечĕ,*
*Шупашкар*

## ÇИТĔНЕКЕН ĂРĂВА ÇУТ ÇАНТАЛĂКА УПРАМА ВĔРЕНТЕС ĔÇРЕ ХАЛĂХ ПУЛТАРУЛĂХĔПЕ УСĂ КУРАССИ

Юлашки вăхăтра çĕр-шывра та, пирĕн республикăра та çут çанталăка сыхласси, унăн пуянлăхне упрасси пысăк вырăн йы-